**2017-2018 - мĕш вĕренӳ çулĕнче**
**шкул шайĕнчи 9 - мĕш класра чăваш чĕлхипе тата литературипе**
**ирттермелли олимпиада хуравĕсем**

*Олимпиада ирттермелли вăхăт - 120 минут.*
*Кашни ыйтăва тĕрĕс хуравласан чи нумайӑи 45 балл пухма пулать.*

1. *(3 балл)*

***Çырли – çулçă курăнми.***

2. Панă предложенинчи йăнăшсене тӳрлетсе çырăр. *(2,5 балл)* Предложенин схемине ӳкерĕр. *(2,5 балл) (Пурĕ - 5 балл)*

*Анне ман çине кăмăлсăррăн пăхса илчĕ те: « Вилнисем çинчен калаçнă чух кулмаççĕ,»- терĕ.*

*А: «Т»,-а.*

3. Калаканĕ хăйĕн шухăшне мĕнле хакланине (çирĕплетнине, иккĕленнине, кăмăлланине т.ыт.те) палăртакан сăмахсене кӳртĕм сăмахĕсем теççĕ. *(2,5 балл)* Çакăн пек сăмахсемпе усă курса икĕ предложени çырнăшăн. *(2,5 балл) (Пурĕ - 5 балл)*

4. (Кашни тĕрĕс куçарушăн + хăйсем тупнишĕн - 0,5 балл. Пурĕ - 5 балл)

*Мăян-лебеда, шăнăр курăкĕ-подорожник, армути-полынь,серте-сныть,упа сарри-папоротник, вĕлтĕрен-крапива*

5**.** Ваттисен сăмахĕсене вĕçлĕр. *(Пурĕ - 5 балл)*

*1). Ятлă çынна ял савать . 2). Юлташсăр çын туратсăр йывăç . 3). Çăкăра чăмласа çи,сăмаха шухăшласа кала . 4). Ĕçчен çынна пĕр сăмах, кахал çынна çĕр сăмах . 5). Ĕçлени çыншăн пулсан та – вĕренни хăвăншăн.*

6. Енисей тексчĕсем? *(2 балл)*

7. Г.В.Тал-Мăрса «Силпи-Палхар пики» драмăна Ф.Павлова халалланă. *(2,5 балл)* Иккĕшĕ пĕрле опера çырма хатĕрленнĕ. *(2,5 балл) (Пурĕ - 5 балл)*

8. Паласахун Юсупĕ. *(2,5 балл)* «Хĕтлĕ пĕлӳ». *(2,5 балл) (Пурĕ - 5 балл)*

9. Нарспипе Тăхтаман туйĕн пĕрремĕш кунĕ Çимĕкпе тӳр килнĕ. (4 балл)

10. Уйăх ячĕсене йĕркипе çырса парăр. *(Кашни тĕрĕс хуравшăн 0.5 балл. Пурĕ - 6 балл)*